Газета «Çĕнтерӳ çулĕ» t.me/putpobedy21 Путь победыОК Путь Победы



# Аслă ăру – çамрăксемшĕн тĕслĕх

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет. Авторĕ – Елена Порфирьева

## Тавах, ватăсене манманшăн!

**Октябрĕн 1-мĕшĕнче кашни çулах тивĕçлĕ канăва тухнă ветерансене тĕлпулусене йыхравлаççĕ, парнесем парса, ăшă сăмахсем каласа хисеплеççĕ.**



Эпĕ сывлăх сыхлавĕнче нумай çул ĕçлерĕм. Медицина ветеранĕсене Вăрнара йыхравланăшăн тем пекех тĕп больница ертӳлĕхне тав тăватăп. Ялта Елена Германова библиотекарь ватăсене халалланă уява чĕнсен хапăлласах клуба тухса утрăм. Вăл яваплăха туйса ĕçлекен специалист. Тĕлĕнетĕп, мĕнле унăн пурне те ĕлкĕрме вăй-хăвачĕ çитет-ши?!

90-ран иртнĕ е сумлă çула çывхаракансене пурне те праçнике йыхравланă. Вырăнта территори пайĕн пуçлăхĕ Олег Петров ăшшăн саламларĕ. Пирĕн библиотекарь мероприятие питĕ йĕркеллĕ хатĕрленнĕ. Елена Леонидовнăна маскировка сеткисене çыхакан волонтерсем пулăшрĕç, пуян сĕтел хатĕрлеме тăрăшни тӳрех сисĕнчĕ. Апат-çимĕçĕ, мĕн кирли пурте пур. Волонтерсем чăваш тумĕсене тăхăннă та питĕ илемлĕн курăнчĕç. Ватлăх çитнине манса кайсах аслă ăрурисем ташларĕç, юрларĕç, савăнчĕç. Гармонист Юрий Тимофеев кашни çулах савăнтарать. Пĕри юрă шăрантарчĕ, тепри сăвă каласа пачĕ. Тамара Егорова – библиотекарьте ĕçленĕ ветеран. Чуна хумхантаракан витĕмлĕ сăмахсемпе çырнă вăрăм сăвва вуларĕ. 91 çулти Галина Семенова уçă сассипе ĕлĕкхи юрра юрларĕ. Пурте алă çупса тав турĕç.

Елена Германова Малтикас Ялтăра ялĕ мĕнле пуçланса кайнине питĕ тĕплĕн, ăнланмалла каласа пачĕ. Аслă ăрурисем уявра савăнса хăйсене çамрăкрах туйрĕç.

Елена Германовăна пултаруллă, сăпайлă пулса ватăсене манманшăн чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе тав тăватпăр, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Нина ПАРАМОНОВА**

## Кĕнекере – йăх-несĕл пуянлăхĕ



**Палăртма питĕ кăмăллă, Вăрнар округĕнчи аслă ăру çыннисем тивĕçлĕ канура та ахаль лармаççĕ – хăйсене килĕштернĕ ĕçре чун канăçне тупаççĕ: çыхаççĕ, тĕрлеççĕ, юрлаççĕ, спортра пиçĕхеççĕ тата ытти те. Хирпуçĕнче пурăнакан Зоя Никифорова вара йăх-несĕл тымарне тĕпченĕ, пуян материал пухса кĕнеке пичетлесе кăларнă.**

«Ман чĕре астăвăмĕ» ятлă вăл. Автор унта Данил Абрамович Абрамовăн пурнăç йывăççине тарăннăн тишкернĕ. Кĕнеке урлă чăвашсен пурнăçне, тĕрĕсрех каласан – Çĕрпел тăрăхĕнчи çынсен кунçулне – пур енлĕн кăтартса пама пултарнă. «Кĕнекене ачасене, мăнуксене, вĕсен ачисемпе мăнукĕсене халаллатăп. Унти калавсене вуласа вĕсем хăйсен йăх-тымарĕ çирĕп те вăйлă, тарăн, ĕçчен пулнине пĕлччĕр»,– тенĕ Зоя Алексеевна.

Абрамовсен йăхĕ ялта паллă пулнă. Данил Абрамович çил арманĕ, унăн тетĕшĕ Павел Афанасьевич шыв арманĕ тытнă. Тепĕр тетĕшĕ Феофан ăста столяр тата кантăк касакан пулнипе палăрнă – Ачакс пасарĕнче чӳрече рамисем сутнă. Тата тепĕр тетĕшĕ, Николай, çĕвĕç пулнă – кĕрĕксем, тăлăпсем, армяксем çĕленĕ. Сад-пахча çитĕнтернĕ.

Кĕнекене кашни йăх представителĕ пирки анлă асаилӳсем кĕнĕ. Ачакси, Уравăшри, Çĕрпелти чиркӳсен историйĕсем кăсăклă. Вĕсене автор архив материалĕсем тата асаилӳсем тăрăх çырнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнчи интереслĕ самантсем чылай. 30-мĕш çулсенче Вăрнар район территорийĕнче, сăмахран, 30 ял хуçалăх артелĕ ĕçленĕ. 1930–1960 çулсенчи çĕр ĕçне сăнлакан сăнӳкерчĕксем питех те кăсăклă.

Кукашшĕн, Данил Абрамовичăн, пурнăçри ӳкерчĕкĕсем интереслĕ. Кашкăр кĕтĕвĕпе тĕл пулни, 50-мĕш çулсен вĕçĕнче пулнă хăрушă çил-тăвăл, хăйĕн чирĕ, репресси вăхăчĕ пирки каланисем шухăша путараççĕ. Кукамăшĕн, Анна Ивановнан, асаилĕвĕсем те тыткăнлаççĕ.

Зоя Алексеевна ялти пурнăç, пысăк уявсем пирки те кăсăклă çырса кăтартать. Çемье историйĕсемпе те пуян кĕнеке.

Зоя Алексеевна Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Малтанах тăватă çул Çĕрпелти вăтам шкулта, унтан 23 çул Хирпуç шкулĕнче вырăс чĕлхипе литература учителĕнче, завучра тăрăшнă. 1994 çултанпа – шкул директорĕнче. «Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ» палла тивĕçнĕ, 1-мĕш категориллĕ учитель пулнă.

Вăл та йăх-несĕлĕсем пекех ăста алăллă. Крючокпа, йĕппе çыхма, тĕрлеме хастар. Чечексем нумай ĕрчетет, вĕлле хурчĕсемпе ĕçлеме кăмăллать. Сăвăсем те çырать вăл. Кĕнекере, сăмахран, ун темиçе сăввине вулама май пур. «Шухăшри рифмăсем»,– тет вăл хăйĕн хайлавĕсем пирки.

Мăшăрĕпе, Вячеслав Петровичпа, виçĕ ачана кун çути панă вĕсем. Упăшки те хăй пекех хастар чĕреллĕ çын. Вăл нумай çул «Победа» хуçалăхăн тĕп инженерĕнче, каярах Хирпуç ял администрацийĕн пуçлăхĕнче, район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕн заместителĕнче вăй хучĕ. Халĕ тивĕçлĕ канура.

Кĕнеке чăннипех те пуян. Вăл ĕмĕтленме, шухăшлама, тишкерме, чи кирли – çемьене хаклама вĕрентет.

Нумаях пулмасть çĕнĕ издание Çĕрпелти шкулта презентациленĕ. Мероприятие Зоя Никифорован тăванĕсем, ентешĕсем чылай пухăннă.

**Светлана ЧИКМЯКОВА**

## Аслă ăрăва хисеплени аван

**Ачасем мĕн пĕчĕкрен аслă ăрăва хисеплеме вĕренни обществăшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Ара вĕсенче çĕршыв малашлăхĕ-çке.**



А.Васильева вĕренекенсемпе пĕрле.

Хапăс шкулĕнче 6-мĕш класра вĕренекенсем хастар. Ачасем ĕç ветеранĕсене манмаççĕ, вĕсем патне çитме тăрăшаççĕ, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунаççĕ.

Светлана Николаевна Михайловăпа Антонина Васильевна Васильева хисеплĕ ветерансем. Хальхинче ачасем шăпах вĕсемпе тĕл пулчĕç. Аслă ăрурисем хăйсем ĕçленĕ вăхăтсене асилчĕç. Ачасене тараватлăхшăн, тимлĕхшĕн тав турĕç.

Светлана Николаевна нумай çул Хапăсри вăтам шкул директорĕнче ĕçленĕ. Вырăс чĕлхипе литературине те вĕрентнĕ. Светлана Михайлова 2005 çулта «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ» ята тивĕçнĕ.

Антонина Васильевна хăйĕн пĕтĕм пурнăçне библиотека ĕçне халалланă. Тĕрлĕ халăх литературине тарăн пĕлнĕрен тĕрлĕ ӳсĕмри вулакансемпе чылай мероприяти ирттернĕ. Çитĕнекен ăрăва кĕнекепе çывăх туслаштарнă, вăл пĕлӳ çăлкуçĕ пулнине ăша хывма пулăшнă.

Шкул ачисем саламлани аслă ăрури çынсене манманнине, вĕсене хакланине çирĕплетет.

**Елена ГРИГОРЬЕВА**